Ӳсет пӗр улмуççи тип çырма пуçӗнче,
Катари урамра, Кив Улхаш ялӗнче.
Çулçӳрен Хусанкай лартнӑ ку йывӑçа,
Таймапуç. Чыс. Мухтав манӑçми сӑвӑça.
        Улмуççи, улмуççи,
Эсӗ – ман чун уççи,
Эс – кун-çулӑн ӑшши,
Эсӗ – пурнӑç тӗшши.
Юрпике пек ларать çуркунне улмуççи
Вӗлле хурчӗсене хӑй патне илӗртсе.
Панулми тутанса пӑхас тетчӗ хуçи,
Анчах шел, вӑл куна илеймерӗ кӗтсе.
        Улмуççи, улмуççи,
Эсӗ – ман чун уççи,
Эс – кун-çулӑн ӑшши,
Эсӗ – пурнӑç тӗшши.
Улмуççи кӗркунне туратсем палӑрми
Ял-йыша парнелет сим пыл пек панулми,
Сӑвӑç пек кашнинех çывӑха вӑл хурать,
Пуç таять, ал тытать, тус-тӑван пек курать.
        Улмуççи, улмуççи,
Эсӗ – ман чун уççи,
Эс – кун-çулӑн ӑшши,
Эсӗ – пурнӑç тӗшши,
Хӑть мӗнле самантра пуç усман ун хуçи,
Йӳнетмен хӑй хакне асапра та нихçан,
Сарлака хулпуççиллӗ лутра улмуççи –
Хусанкайӑн хӑрми чӗр тымарӗ паян.
        Улмуççи, улмуççи,
Эсӗ – ман чун уççи,
Эс – кун-çулӑн ӑшши,
Эсӗ – пурнӑç тӗшши.